**Валери ТУРКАЙ**

# Тахçан пулни тепĕр хут чĕрĕлсен

## Куçма Турханăн «Сĕве Атăла юхса кĕрет» романне тишкерме хăтланни

*Эс ху мĕн вуланине каласан, эпĕ эс кам иккенне калăп.*
А.П.ЧЕХОВ

"Сĕве Атăла юхса кĕрет" романа-и?.. Вуланă, паллах, вуланă!.. Анчах пиртен нумайăшĕ ăна тахçан ача чухне вуланă та... шел те, манмаллипех маннă.

Романĕ, чăн та, пысăк – пĕрре вуланипех ăнлансах та пĕтереймĕн ăна, чаплăран та чаплă çак хайлавăн ытарма çук техĕмне те тĕпĕ-йĕрĕпе туйса кураймăн. Пулаççĕ-çке-ха ĕмĕр тăршшĕпе вуламалли романсем, сăмахран, Михаил Булгаковăн "Мастер и Маргарита", Габриэль Гарсиа Маркесăн "Сто лет одиночества" романĕсем). Куçма Турханăн "Сĕве Атăла юхса кĕрет" романне те, ман шутпа, ĕмĕр тăршшĕпех вулама пулать.

Мĕншĕн тетĕр-и?

Мĕншĕн тесен ку романра пирĕн, чăвашсен, Иртнĕ Кунăмăр сăнланнă (тата еплерех сăнланнă!..). Иртнине вара пĕлмеллех. Хăйне хăй, хăйĕн тăван халăхне хисеплекен кашни çыннăн пĕлмелле Иртнине (Иртнисĕр Пуласси çук-çке-ха!). Ку романа чăн-чăн Ăста çырнă. Çавăнпа та çак романа вуланă чух – иккĕмĕш хут вулатăн-и ăна, виççĕмĕш-и – кашнийĕнчех кунта ўкерĕннĕ тĕнчене ху валли çĕнĕрен уçатăн.

Эпĕ историк е литература тĕпчевçи мар. Эпĕ – вулакан кăна. Тата эпĕ Куçма Турханпа унăн "Сĕве Атăла юхса кĕрет" романĕ умĕнче пархатарлăн пуçăма таякан чăваш.

"Сĕве Атăла юхса кĕрет" романа хам мĕнле курни, мĕнле ăнланни çинчен каласа парас тетĕп эпĕ сана, вулаканăм. Пĕтĕм тĕллевĕм те çакă çеç манăн.

### УНПА ИСТОРИКСЕМ ТЕ КАНАШЛАНĂ,
### е Истори темипе çыраканăн историк пулмаллах

"Трилоги çырма лариччен питĕ нумай документ пуçтарнă вăл. Ун чухлĕ документ историксен те пулман-тăр. Наука тĕпчев институтĕ унăн килĕнчех пулнă.



*Куçма Турхан хăйĕн тăван тăрăхĕнче.*

Историксем те канашланă унпа, пĕлменнине ыйта-ыйта пĕлнĕ. (Денис ГОРДЕЕВ. "Халăхри çын". "Ялав", 10 №, 1995 ç.).

"Ку кĕнекене çырнă вăхăтра К.Турхан ячĕ пĕр вунă çулсем хушши ниçта та курăнманччĕ. Çав вăхăтра вăл архивсенче чакаланнă, çĕр те пĕр документпа паллашнă, историллĕ романсем нумай вуланă. Тăрăшнă çын, ĕçленĕ. XVI ĕмĕр пуçламăшне кайса тухма хăюлăх та, пĕлӳ те кирлĕ...

Çĕнни ку романра маншăн кашни страницăрах. Халиччен сĕм çĕр пек туйăннă вăхăт Турхан романне вуласа тухнă хыççăн вăйлă прожекторпа çутатнă евĕр уçăлса кайрĕ, куç умне çĕнĕ материк тухса тăчĕ тейĕн. Истори чĕрĕлчĕ, тусанлă документсене чун кĕчĕ. Халь ĕнтĕ эпир вăл вăхăтра пирĕн тăрăхри çынсем мĕнле пурăннине кăна мар, вĕсем мĕн ĕмĕтленнине те, мĕншĕн кĕрешнине те пĕлетпĕр" (Хветĕр УЯР "Сĕве Атăла юхса кĕрет". "Виçĕ кун та виçĕ каç" кĕнекерен. Шупашкар, 1965 ç.).

"Турханăн ытларах хăйне тĕллĕн ĕçлеме, ун чухнехи чăваш çĕршывĕпе чăваш çыннисен пурнăçĕ çинчен калакан документсемпе фактсене хăйне тĕллĕн шырама тивнĕ". (Михаил СИРОТКИН. "Сĕве Атăла юхса кĕрет" романа вуланă май тĕрленнĕ шухăшсем". "Тăван Атăл". 2 №, 1961 ç.).

"К.Турхан, пултаруллă художник пулнă май, истори тĕпренчĕкĕсене пĕрчĕн-пĕрчĕн суйласа, пире ун чухнехи пурнăç таппине куç умĕнчи пек çывхартса сăнла-

са пачĕ те, çав историллĕ тапхăрăн калама çук пысăк пĕлтерĕшĕ пире çĕнĕ хăватпа яр уççăн курăнса кайрĕ". (ИЛПЕК Микулайĕ. "Халăхпа пĕрле. К.Турхан аллă çул тултарнă май". "Ялав", 10 №, 1965 ç.).

"Çак виçĕ çаврăмлă кĕнекене алла тытсан хăвна тӳрех авалхи тĕнче сывлăшĕпе сывлама пуçланă пек туятăн. Мĕн чухлĕ сăнар. Мĕн тĕрлĕ хутшăну. Мĕнешкел пулăмсем. Йăлтах килĕшӳллĕ. Пĕтĕмпех пĕр тĕвве тĕвĕленнĕ теме пулать. Тĕввин çирĕплĕхĕ вара – Чăнлăхра.

... Хĕвĕшет пурнăç Атăлпа Сĕве тăрăхĕнче. Турхан çакна историк виçипе хаклать, художник чунĕпе туйса тăрать". (Аристарх ДМИТРИЕВ. "Иртнĕ кун çути". Кузьма Турханăн "Сĕве Атăла юхса кĕрет" романĕ умĕн калани. Шупашкар, 1994 ç.).

***

Тĕрĕс, питĕ тĕрĕс калать Хветĕр Уяр – "XVI ĕмĕр пуçламăшне кайса тухма хăюлăх та, пĕлӳ те кирлĕ".

Куçма Турханăн, тав Турра, Иртнин тĕксĕм те сулхăн "нӳхрепне" кĕрсе тухмалăх хăюлăхĕ те, пĕлĕвĕ те çителĕклĕ пулнă.

Атăл тăрăхĕнче пурăнакан тăватă халăхăн – чăвашсен, вырăссен, тутарсен тата çармăссен – кун-çулĕн чи кăткăс та теветкеллĕ тапхăрне уçса-ӳкерсе кăтартать хăйĕн романĕнче К.Турхан. Евразин пĕр пысăк лаптăкĕн шăпи татăлнă пулнă Куçма Турханăн "Сĕве Атăла юхса кĕрет" романĕнче сăнланнă тапхăрта. "Возникнув на развалинах Болгарии, – çырать хăйĕн "История государства Российского" тĕпчевĕнче Н.М.Карамзин, – и поглотив ее бедные остатки, Казань имела и хищный, воинственный дух моголов, и торговый, заимствованный ею от древних жителей сей страны, где издавна съезжались купцы арменские, хивинские, персидские (и где он доныне сохранился: доныне казанские татары, потомки Золотой Орды и болгаров, имеют купеческие связи с Востоком). Около 115 лет казанцы нам и мы им неутомимо враждовали... Новые мирные договоры служили поводом к новым изменам...»

Мĕн кăна пулса иртмест-ши çак романа вуланă хушăра пирĕн куçăмăрсен умĕнче!.. Акă пирĕн умра Хусан ханлăхне пăхăнса та тăрантарса пурăнакан Ту енĕ, акă – тутарсен пуян та мăн кăмăллă шĕкĕр хули Хусан, акă – çил-тăманлă Мускав...

"Эпир, чăвашсем, икĕ вут хушшинче," – теççĕ çине-çинех "Сĕве Атăла юхса кĕрет" романри сăнарсем. "Эп ăнланатăп, – тет Тукай Иван Черемисинова, хăйĕн тусне те хăнине ("Икĕ элчĕ" сыпăк), – пире, чăвашпа çармăс мăрсисене, йывăр, мĕншĕн тесен эпир икĕ вут хушшинче. Анчах ниçта кайса кĕме те çук".

"Тотарсем килеççĕ – пирĕн ялсем çонаç, – тарăхса калать Сăр тăрăхĕнчи чăвашсене вырăссем енне куçма йыхăракан Эхмемет мучи, – вырăссам килеç – пирĕн ялсам çонаç. Çапах та, ман шутпа, вырăссам вайлăрах. Эппин, пирĕн вăйлисен енче полмалла" ("Васильев-Новгородра").

"Сутăнчăксем, гяурсем вĕсем пурте! – тулхăрать Хусан хакимĕ Бурнаш, Сар-

ри килĕнчен намăс курса килне таврăнаканскер, – Ярлăк илме Хусана çÿреççĕ, пасара – вырăссем патне. Мĕн пур япалине вырăссене сутаççĕ, мурсем" ("Икĕ хурчка").

"Ма вырăссем майлă çаврăнса ÿкрĕç Ту енчи мăрсасем? – ыйтса пĕлме хăтланать кĕрÿшĕнчен, Магмет Беззубовран, "мăсăльмансен тĕн наркăмăшĕ... юнне, пуç мимине кĕрсе вырнаçнă" Туканаш. – Ну, тутар князĕсем усал тейĕпĕр, вĕсемпе килĕштерейместĕр эсир. Вырăссем мĕнрен лайăх? Ма эсир кашкăр çăварĕнчен хăтăлса упа çăварне çакланасшăн?.. Мĕнпе илĕртрĕç сире вырăссем? Мĕн туртать сире вĕсем патне?"

"Хусан патшалăхĕнчи мăшкăллă пурнăç тĕртет, акă мĕн", – хуравлать хуньăкăшне Магмет ("Туканаш").

Е тата Саррипе Тукай калаçнине итлесе пăхар-ха ("Иртнĕ кунăн çути çук"):

– Кам çăкăрне çиен, çавна мухтама тивет, – терĕ Сарри. – Пурнăç çапла вĕрентет. Вăхăчĕ мĕнле хивре пулчĕ пирĕн ĕмĕрте.

– Хивре пулчĕ, хивре. Ах тур вăйлă тытăçса ÿкрĕç те вырăссемпе тутарсем. Пирĕн ăçта кайса кĕрес. Эпир икĕ вут хушшинче тăрса юлтăмăр.

– Çапах та вырăссем енне куçса йăнăшмарăмăр пулас эпир, хăта?

– Çук, ăна йăнăшман, – çирĕплетрĕ Тукай.

"Икĕ вут хушшинче" пурăнакан халăхăн хăйĕн пуласлăхĕ пирки хăйĕнех шухăшлама тивнĕ.

"Еще Казань тишиною и верностию к России, – çирĕплетет Н.М.Карамзин хăйĕн маларах асăннă тĕпчевĕнче, – могла бы продлить бытие свое в виде особенного мусульманского царства, но рок стремил ее к падению".

Хусанăн элчелĕ çитни нумай сăлтавран килнĕ, паллах. Тĕп сăлтавĕ – Ту ен, урăхла каласан, хальхи Чăваш енпе Туçи Çармăс тăрăхĕ Хусантан уйрăлса Мускавпа пĕрлешни.

Историксем Хусан ханлăхĕ 1437 çулта йĕркеленнĕ тесе çирĕплетеççĕ. Пирĕн мăн асаттесем çав çултанпа Хусан ханлăхĕнче пурăнаççĕ – тутарсемпе пĕрле Мускав çарĕсемпе çапăçаççĕ, ырми-канми Хусан хыснине пуянлатассишĕн тар тăкаççĕ т.ыт. те, т.ыт.те. Çак тапхăрта, паллах, чăвашсен пĕр пайĕ – "Сĕве Атăла юхса кĕрет" трилогири Урасметпе Туканаш йышшисем – тутарланса кайнă (сăлтавĕ паллă – Хусан ханлăхĕнчи тÿре-шара пулас тетĕн пулсан, аслаçусен тĕнне ман та мăсăльмана тух).

Ун пек-и, кун пек-и – Хусан престолне Крымран персе çитнĕ Гирейсем (Сахиб-Гирейпе Сафа-Гирей) йышăниччен чăвашсем ку патшалăхра хăйсен тĕнĕпе те хăйсен йăли-йĕркипе пурăнма пултарнă. Таçти муртан килнĕ Гирейсем Ту енчи халăха вăйлăрах çаратма çеç мар, тĕн тĕлĕшĕнчен те хĕсĕрлеме пуçлаççĕ.

"Эп пĕлеп, эсир гяурсемпе пĕрех, – хăртать Тукайпа Саррине "Мускавпа Касимовран илсе килсе Хусан ханне лартнă" Шигалее чунран курайман Карамыш мăрса. – Эсир пирĕн тĕне ячĕшĕн çеç йышăннă, çапла мар-им? ("Çĕнĕ хан").

Сафа-Гирейпе çак мăн кăмăллă ханăн хÿрешкисем чăвашсене çеç мар, çĕр

ҫинчи мĕн пур халăха мăхамет тĕнне йышăнтарнă пулĕччĕҫ те ҫав... Анчах халăхĕ йышăнасшăн мар-ҫке "чаплăран та чаплă" мăхамет тĕнне:

"Кăҫал Урасмет ял ҫыннисене мăхамет тĕнне йышăнтарассипе хăратма пуҫларĕ. Ҫулла вăл Тукай ялне муллапа тата имампа килнĕччĕ. Ула чаппан тăхăнса янă мулла халăха аллах пирки, ăна ĕненекенсем леш тĕнчере мĕнле ырлăх курасси пирки нумай ăнлантарчĕ, анчах ял ҫыннисем питех итлесшĕн пулмарĕҫ. Тахăшĕ систернипе пĕрерĕн-пĕрерĕн килĕсене саланчĕҫ, юлашкинчен Урасметпе ун хăнисем ыйхăласа ларакан темиҫе ҫынпа ҫеҫ тăрса юлчĕҫ.

– Усал халăх сирĕн ялта, – терĕ кăмăлсăр пулнă имам пурте кайса пĕтсен. – Нумай вăй хумалла пулать вĕсене ислам тĕнне йышăнтарма.

– Аскерсем (урăхла: ҫар ҫыннисем. – В.Т.) илсе килмелле, – ăс пачĕ мулла. – Питех ўкĕтлесе тăма кирлĕ мар, вăйпа хăратмалла, сехĕрлентермелле лайăхрах. Киремет картине ҫунтарса ямалла" ("Чарусăр ҫамрăксем").

"Хам пулсан эпĕ сире пусмăрламан та пулăттăм, – чееленме пăхать мулла таврашĕпе вĕлерсен те пĕр чĕлхе тупма килĕшмен ял халăхĕ умĕнче чунне тахҫанах "шуйттана сутнă" Урасмет. – Кирек мĕнле тĕн тытăр, маншăн пурпĕрех. Анчах эпир Хусан патшалăхĕнче пурăнатпăр-ҫке. Эппин, пирĕн Хусан патшин сăмахне, ун ҫыннисем калакан сăмаха итлес пулать.

– Эпир яланах итленĕ, – хуравлать Урасмете ял ҫыннисенчен пĕри. – Хырҫă куланай тўлетпĕр, ҫар валли ҫынсем паратпăр...

... Анчах тĕнпе ан пăтратчăр пире. Кала эс вĕсене, Урасмет. Эпир пуринпе те тимлешетпĕр, анчах тутар тĕнне йышăнмастпăр" ("Хура юпа").

... Акă вăл – чăваш халăхĕ Хусан ханлăхĕнчен чунĕпе те чĕрипе писнин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри. Ҫак сăлтавах XV ĕмĕр варринче, "икĕ вут хушшинче" пурăнакан чăвашсене Сăр шывĕн леш ҫыранĕнче пурăнакан вырăссемпе ҫывăхланма хистет.

Тата тепĕр пысăк сăлтав та пулнă вăл вăхăтра – чăвашсене вырăссемпе пĕр чĕлхе тупма хистенĕ сăлтав. Ку вăл – пирĕн асаттемĕрсен аслашшĕсене вăрҫă йăлăхтармаллипех йăлăхтарса ҫитерни:

"Ятламас ăшра вырăссене Хусана хирĕҫ начар ҫапăҫнăшăн вăрҫать. Темшĕнҫке вĕсем хăйсене темиҫе ҫул хушши тутарсем ҫаратнине, йĕкĕлтесе, витлесе тăнине тўсеҫҫĕ те, тарăхса ҫитнипе йĕннинчен сиксе тухнă упа сунарҫăсене хăваласа кайнă пек, пысăк ҫарпа Хусан патне капланса анаҫҫĕ. Ҫапăҫаҫҫĕ-ҫапăҫаҫҫĕ вара, хулана илеймеҫҫĕ. Унтан темĕн чухлĕ халăх ҫухатса каялла таврăнаҫҫĕ. Юнаса хăвараҫҫĕ тутарсене: "Астăвăр эсир, тепре пырсан тата та хытăрах лекет сире. Пирĕн ҫĕрсене тек ан ҫаратнă пултăр", – теҫҫĕ. Ҫарĕ пысăк хăйсен, темле хулана илмелĕх те пур.

Е темиҫе эрне килсе халтан каяҫҫĕ-ши вĕсем? Ятламас ăна пĕлмест, ун ҫинчен шутламан, анчах унăн·Хусана часрах парăнтарас килет. Ăна чăваш ялĕсем витĕр пĕрре тутарсем, тепре вырăссем ҫаратса иртни йăлăхтарнă. Хусана парăнтарсан вăрҫăсем пĕтĕччĕҫ вара, ялсем ҫунма пăрахĕччĕҫ. Пĕр-пĕрне ҫапла

тыткӑна илесси те пулмӗччӗ ун чух, вырӑссемпе чӑвашсем туслӑ пурӑннӑ пулӗччӗҫ" ("Вӑрҫӑ йӗрӗпе").

Паллах, Хусан ханлӑхӗнче пурӑнакан, Хусан ханлӑхне тӑрантаракан чӑвашсене вырӑссем те "пуҫран шӑлмаҫҫӗ".

"Вырӑссем вӑрҫӑ хыҫҫӑн Хусантан ҫиллессӗн таврӑнаҫҫӗ, куна Ятламас питӗ лайӑх пӗлет. Ывӑннӑ ҫын, хулана илейменнишӗн чунтан тарӑхнӑ воин ҫул ҫинче ниме те хӗрхенсе тӑмасть. Хӗрхенмешкӗн ку вӗсен ҫӗрӗ те мар, чӑвашсемпе ҫармӑссен ҫӗрӗ, Хусан патшалӑхӗн ҫӗрӗ. Аслисем, ҫарти пуҫлӑхсем, воинсене ялсене ҫунтарма, утӑ капанӗсене вут тӗртме, ҫынсене тыткӑна илме хӑвала-хӑвала яраҫҫӗ" ("Вӑрҫӑ йӗрӗпе").

"Победу купили мы весьма дорогою ценою", – ҫырать "История государства Российского" кӗнекинче Н.М.Карамзин.

Вырӑссене те йывӑра килнӗ пулсан Мускавпа Хусан вӑрҫи, "икӗ вут хушшинче", вӑрҫӑ хирӗ пулса тӑнӑ Чӑваш Енре пурӑнакан халӑхӑн ҫак синкере пула мӗн тӳсме тивнӗ-ши?...

"Хусана ӗнтӗ эпир ылханса кӑна аса илетпӗр, – татса калать хайӗн тутарланнӑ ывӑлне Туканаша Тукай. – Пирӗн Мекка халь – Мускав".

Мӗн тӑвӑн, пурне те йӑлӑхтарса ҫитернӗ вӑрҫӑ май пур таран хӑвӑртрах вӗҫлентӗр тесен вӑл вӑхӑтри чӑвашсемпе ҫармӑссен ҫине тӑрсах Хусанпа вӑй виҫекен вырӑссене пулӑшмалла пулнӑ.

Вырӑссем Хусана еплерех илнине сӑнласа парать-и пире К.Турхан, тутарсем хайсен шӗкӗр хулине еплерех паттӑррӑн хӳтӗленӗ пирки сӑмах тапратать-и (тӗрӗссине тӗрӗсех тесе калас пулать: Хусан халӑхӗ хайӗн тӑван хулине чӑнчӑн паттӑр пек хутӗлет: "...Народ ужаснулся рабства, – ҫырать кун пирки Н.М.Карамзин. – В душах вспыхнула благородная любовь к государственной независимости, к обычаям, к законам отцов: усиленная воспоминаниями древности – раздраженная ненавистью к христианам... В движении, в пылу геройства казанцы не чувствовали своей слабости... Пленник сказывал, что казанцы, готовые умереть, не хотят слышать о мирных переговорах... Отчаянные татары, сломленные низверженные с верху стен и башен, стояли твердым оплотом в улицах, секлись саблями, схватывались за руки с россиянами, резались ножами в ужасной свалке"), е анат ҫармӑссен Мускав Хусана парӑнтарнӑ хыҫҫӑн пуҫланнӑ пӑлхавӗ пирки каласа парать-и пире ҫыравҫӑ – романӑн кашни страницинче истори чӑнлӑхӗ тапса тӑрать.

Ахальтен мар, паллах, Куҫма Турханӑн ҫак хайлавне пирӗн чи паллӑ, чи хисеплӗ историкӑмӑр Василий Димитриевич Димитриев хайӗн "Заметки историка о романе К.С.Турхана "Свияга впадает в Волгу" статйинче ("Историческая действительность и ее отображение в чувашской литературе" кӗнеке, Шупашкар, 1973 ҫ.) питех те пысӑк хак парать. "Хӑш-пӗр ыйтусене тӗпчес тӗлӗшпе, – ҫырать асӑннӑ статьяра В.Д.Димитриев, – Турхан историксенчен чылай мала кайнӑ... "Сӗве Атӑла юхса кӗрет" – чӑваш литературинчи анлӑ та чаплӑ пулӑм".

***

... "СĔВЕ АТĂЛА ЮХСА КĔРЕТ" романăн кашни страницинче чун кĕнĕ Истори пурăнать. Акă мĕншĕн ку роман вулакана тыткăнлать, акă мĕншĕн пин-пин вулакан Куçма Турханăн çутă сăнарĕ умĕнче пуçне таять.

**ЧĂН-ЧĂН ÇЫРАВÇĂ – ЯЛАНАХ ХУДОЖНИК, ЯЛАНАХ ПОЭТ,**

**е Турхан романĕнчи илем тĕнчи пирки пĕр-ик сăмах**

Çапла, "Сĕве Атăла юхса кĕрет" трилоги авторне пĕр иккĕленмесĕр, ним ўстермесĕр пысăк художник тата чăн-чăн поэт теме пулать.

"Турхан пултарулăхĕ тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ мана, – çырать романăн 1994 çулта кун çути курнă кăларăмĕн умсăмахĕнче çак трилогие вырăсла куçарса кун çути кăлартнă Аристарх Дмитриев. – Тем пысăкăш капан пек туйăнатчĕ мана унăн трилогийĕ. Пучахăн-пучахăн, кĕлтен-кĕлтен пухса типтерлĕн хăпартса лартнă капан... Чĕлхене хуçкаламасăр, чуна пырса тивекен сăмахсемпе сăнлать çыравçă пурнăçа, çутçанталăк илемне".

Турхан-художникăн ăсталăхĕ "Сĕве Атăла юхса кĕрет" романăн... ятĕнчех яр уççăн курăнать.

Тĕлĕнмелле ăнăçлă, илемлĕ ят тата сăнар тупнă хăйĕн чаплăран та чаплă, хăватлăран та хăватлă романĕ валли Куçма Турхан!..

Сĕве Атăла юхса кĕрет... Пурсăмăр та питĕ лайăх ăнланатпăр-çке-ха çак сăнарăн, çак сăмах çаврăнăшĕн символла пĕлтерĕшне. Атăл вăл – Атăл тăрăхĕнче пурăнакан пĕтĕм халăхăн, пĕтĕм Раççейĕн аслă юханшывĕ. Атăл вăл – пĕтĕм Раççейĕн, пĕтĕм вырăс халăхĕн çутă символĕ. Атăл вăл – пирĕн те, чăвашсен те!.. Эпир те, чăвашсем, сĕм авалтанпа асамлă Атăл хĕрринче пурăнатпăр, Атăла чун-чĕререн юратса пуç таятпăр. Пирĕн пекех сĕм авалтанпа Атăл хĕрринче çармăссем, тутарсем, ирçесемпе мăкшăсем, ытти халăхсем пурăнаççĕ, вĕсем те Атăла чунтан юратаççĕ, Атăла пуç таяççĕ...

Атăл вăл – пĕтĕм Раççей юханшывĕ, пĕтĕм Раççей символĕ.

Сĕве вара вăл – пирĕн, чăвашсен. Сĕве вăл – эпир, чăвашсем...

Сĕве Атăла юхса кĕрет пулсассăн, юхса кĕмеллех Сĕвен Атăла.

Тĕнчен этеме пăхăнман, этемрен пин хут хăватлăрах Йĕрки пур. Çав Йĕрке Сĕвене Атăла юхса кĕмелле тунă, çавăнпа юхса кĕрет те Сĕве Атăла...

***

Турхан-художникăн вышкайсăр пысăк ăсталăхĕ романăн пĕрремĕш сыпăкĕнчех, пĕрремĕш сăмах çаврăнăшĕсенчех куçа курăнать, чуна тыткăнлать:

"Çĕлен эрни хыççăн çанталăк тепре юсанса кайрĕ, ку таврара кашни кĕркуннех пулакан тўлек кунсем пуçланчĕç. Малтанхи хĕрўлĕхĕ çук пулсан та ялан хĕвел пăхрĕ...

Уй-хир йăлтах пушанса юлнă ĕнтĕ, унта халь пĕр çĕмел-сурат та çук, улăхра та утă капанĕсем сайра тĕл пулаççĕ. Çак вăхăтра сарă хăмăллă уй-хирпе тин

шăтнă ешӗл калча пек курăнакан çаран çине, çу каçиччен пӗр канмасăр тăрăшнă ӗçченсем çине пăхатăн.

Вăрман тесен вара вăл çуллахинчен те капăр. Халӗ вăл вӗçӗмсӗр тăсăлса каякан симӗс хӳме пек курăнмасть ӗнтӗ, унти кашни йывăç, çитӗннӗ хӗр евӗр, хăйӗн сăнӗпе, хăйӗн кӗлеткипе палăрса тăрать (эпӗ палăртнă. – В.Т.) Аякранах уйăрса илетӗн – кунта ав сап-сарă хурăнлăх, юманлăх, унта – хӗп-хӗрлӗ ăвăслăх, вӗренелӗх, лере – çуллахи пекех симӗс чăрăшсемпе ылтăн тӗслӗ хырсем..." ("Çунакан ухă йӗппи").

Куçма Турхан хăйӗн кашни сăнарне – ырă çын-и вăл, усал-и, чăваш-и вăл, тутар-и е вырăс-и, патша-и вăл е тарçă-и – çав сăнара çеç тивӗçлӗ "сăрăсемпе" ӳкерет.

Аса илер-ха, апла, Куçма Турхан таланчӗ çуратнă хăш-пӗр сăнарсене.

Йӗкӗт чухнехи Ахтупай – "...Çак тăпчам ачан кӗлетки пӗрре те ыттисенни пек мар. Вăл пӗвӗпе лутрарах пулсан та юман кӗрешӗ пек тӗреклӗ. Икӗ ури – икӗ вăта юпа, икӗ алли – икӗ кисӗп, кăкăрӗ вара темиçе шит те пулӗ. Турă ан хуш-тăрах Урасмета унпа çыхланма. ("Упа").

Вăрă-хурахăн синкерлӗ çулӗ çине тăма пуçлакан Урасмет – "Чинпа хăйӗнчен аслă çын умӗнче вăл вӗçӗмсӗр пăхăнакан йăпăлти çын пулнă пулсан, халӗ пурне те хушакан, пăхăнтаракан, тем те пӗр каласа хăртакан çын пулса тăчӗ. Сăмала пек хуп-хура тата путек çăмӗ пек кăтра çӳçӗсем тăраткаланса кайрӗç, хитре пичӗ çине темле шурă пăнчăсем тухса тулчӗç" ("Ырă сунни").

Чунӗнче те чӗринче юрату кăвайчӗ ялкăшакан Эрнепи – "...Темшӗн ăна халь çак сӗм вăрманта куçран вӗçерӗнес пулсассăн, Ахтупай – ун ӗмӗчӗпе пурнăçӗ – таçта кайса кӗрессӗн, Эрнепишӗн ӗмӗрлӗхех çухалассăн туйăнать. Çук, Эрнепи ăна çухатмастех. Вăл, чăтлăхра хăйӗн валли икӗ аллипе те çул уçса пырса тата пуç çинчен ялан сирӗлме пăхакан тутăрне вӗçӗмсӗр тӳрлетсе малаллах талпă-нать. Хăй утăм тумассерен ура айне пăхать – пӗр-пӗр тип шанкă çине пусса сасă тăвас марччӗ...

Эрнепин кăвак куçӗсем чарăлнă, пиçнӗ палан пек хӗрлӗ тути кулать".

"Эрнепи пуçне кӗрен тутăр çыхнă. Уринче – сап-сарă хурама пушăтӗнчен тунă пӗчӗк пуçлă çăпатапа чăлт шурă тăла. Улача кӗпи кӗскерех пулни вунултă çулхи Эрнепие пӗве çитмен хӗрача пек кăтартать. Сулахай аллинче унăн кӗмӗл сулă, кăкăрӗ çинче – вӗтӗ çеç тенкӗллӗ мăй çыххи. Эрнепин хура куç харшийӗсем хӗп-хӗрлӗ сăн-пите темле тирпейлӗх, çирӗплӗх тата вăй парса тăраççӗ" ("Чун савни").

"Купăс ăсти Ятламас" сăнарне еплерех ӳкерет тата Турхан-художник:

"Пӗвӗпе Ятламас çӳллӗ те тӗреклӗ çын. Куçӗсем вутла çунса тăраççӗ. Вӗсенче яланах кулă, савăнăç, йӗкӗлтӳ тата шухăлăх палăрса тăрать. Вăтăра çитеймен пулсан та качча ват çын пек сухал ӳстерсе янă, ку сухал вара, ун çӳçӗ пекех, сăмала евӗр хуп-хура. Пӗрремӗш хут курнă чухне ку сăн-пит чăнах та çынна шиклентерет, анчах хăнăхса çитсен малтан ютшăннă çынсем Ятламасран хăпма та пӗлмеççӗ" ("Купăс ăсти Ятламас").

Турхан-художникăн сăмахĕсем пулăшнипе ўкерчĕк-сăнар тăвас ăсталăхĕ, куратпăр ĕнтĕ, вышкайсăр пысăк. Ку ăсталăх "Сĕве Атăла юхса кĕрет" романра çутă та хăватлă çăлкуç пек тапса тăрать.

"Акă пĕрремĕш турсенчен ("тур" тесе çапăçу вăхăтĕнче, крепоçсене тапăннă чухне, çар çыннисене хўтĕленме май паракан хатĕрсене каланă. В.Т.) аякра та утлă çар речĕсем пĕр-пĕрин çине çиçĕм пек хăвăрт пырса тапăнчĕç, – вулатпăр эпир Хусаншăн пынă юнлă çапăçăва сăнлакан "Çўллĕ иккен Хусан хўмисем" сыпăкра. – Лашасем, месерле кайса ўкес пек, чĕвен тăчĕç. Вăрăм сăнăсем шатăртатса хуçăлчĕç, кольчугăсене тата ытти тимĕр япаласене пырса перĕнсе хĕçсем чанклатрĕç. Пĕр воинĕ хĕçне ытла тарăхса сулса ячĕ курăнать, хĕç аларан вĕçерĕнчĕ те аякка ыткăнса кайрĕ, такам лаши хырăмне ухă йĕппи пырса тăрăнчĕ. Ут хартлатса илчĕ, малалла тапса сикрĕ, воинсен ушкăнне пырса тухса темиçе çынна хăй айне турĕ.

***

"Сĕве Атăла юхса кĕрет" трилоги – чăн-чăн гени çырнă роман. Эп кун пирки пĕртте иккĕленместĕп. Эп ку романăн кашни сыпăкне чунăмпа киленсе вулатăп. Çав вăхăтрах мана ку романра пуринчен ытларах килĕшекен икĕ сыпăк пур.

Çав икĕ сыпăкран пĕрне К.Турхан "Чун савни" тесе ят панă, тепĕрне – "Туй".

Икĕ пайран тăракан чаплăран та чаплă поэма тенĕ пулăттăм çап-çамрăк Эрнепипе çап-çамрăк Ахтупайăн тин тивсе асамлă хĕлхемпе ялкăшакан таса юратăвне сăнлакан çак икĕ сыпăка.

Çапла, çапла – рифмăланă тĕссĕр, чунсăр сăмах купине сăвă е поэма теме çук. Çав вăхăтрах "прозăллă хайлав" çырсах хăйĕн вулаканне талантлă çыравçă ...чăн-чăн поэзи парнелеме пултарать (ку шухăша тĕнче литературинчи, çав шутра чăваш литературинчи нумай тĕслĕхпе çирĕплетме пулать).

"Туй" сыпăкра Ахтупайпа Иливан ăмăртса шăпăр каланине акă еплерех çырса кăтартать Куçма Турхан:

"Шăпăрсем пĕр-пĕринпе хирĕçмесĕр, пĕр-пĕрне нимĕн чухлĕ те пўлмесĕр такама хĕвеллĕ те ăшă кун уява тухма, пурнăç йывăрлăхĕсене вăхăтлăха манса кайса халăхпа пĕрле савăнма йыхăрчĕç. Чуна çĕклентерсе яракан илемлĕ кĕвĕ çак сывлама çук пăчă пўрте пĕр кас вăштăр çил вĕртсе кĕнĕ пек, ку хăтлă çил вара тарланă пит-куçа çеç мар, çынсен чун-чĕрине те уçăлтарса, кăмăла çемçетсе хăварнă пек туйăнчĕ.

Ахтупая хăйне ку кĕвĕ ирхине ирех уçланкăна тухнă кĕтў ачи пĕтĕм чунтан савăнса шăхлич каланине аса илтерчĕ. Савăнать çамрăк кĕтўçĕ, таврари вăрман илемĕпе, ирхи ырă çанталăкпа киленет, вăрманти мĕн пур кайăксене хăйĕнпе тупăшса, çунат çапса юрра яма чĕнет...

Шăпăр каланă майăн çапла шухăшласа тăракан Ахтупай юлташĕ çине пăхрĕ те шартах сикрĕ – Иливаң сăмсинчĕн юн каять. Хăй çаплах маттурланать-ха, урисемпе ташланă пек туса шăпăрне вĕрет. Акă ун шăпăрĕ аларан вĕçерĕнчĕ те çĕре çатлатса ўкрĕ, ун хыççăн, касса янă юман пек, Иливан хăй те урайне персе анчĕ..."

Куçма Турхан чунĕпе те, чĕрипе те чăн-чăн Поэт пулни, кунсăр пуçне вăл хăйĕн "Сĕве Атăла юхса кĕрет" романĕнчи паллă мар авторсен сăввисемпе, пурăна киле халăх юррисем пулса тăнăскерсемпе, калама çук ăнăçлă, калама çук вырăнлă та анлăн усă курнинче те палăрать.

Роман пуçланасса та "Пирĕн енче хурамалăх..." сăвăпа пуçланать. Романăн иккĕмĕш пайĕн умĕнче те, эпиграф вырăнне, харăсах халăх поэзийĕн икĕ çаврăмĕпе усă курнă:

Хурлăхан хурланать хăй хуришĕн,
Эп хурланап çын чул çуккишĕн.
Хурлăхантан хура çырла çук,
Пиртен те хурлăхлă çынсем çук,

– вулатпăр эпир пĕр çаврăмĕнче.

Хăмăш пекех пĕвĕм ман
Улăм ури пулайрĕ;
Сарă ука çӳçĕме
Хурăн шурри çапайрĕ;
Панулми пек питĕме
Хура куççуль хуратрĕ,

– вулатпăр "Хĕр йĕрринчен" илнĕ тепĕр çаврăмра.

Халăх поэзийĕпе пĕлсе те ăнăçлă усă курни Куçма Турханăн капла та чăн-чăн поэзи шайне çĕкленнĕ прозине тата илемлĕрех, тата кĕвĕлĕрех тăвать.

"Сĕве Атăла юхса кĕрет" трилогин иккĕмĕш кĕнекин пĕрремĕш пайне ("Ырă кӳршĕ") еплерех илемлĕ авалхи сăвăпа пуçласа ярать тата Турхан:

"Ки-как, ки-как хур акăш,
Кĕмĕл çунат хур акăш,
Вашлатан эс, вĕçетĕн,
Тĕнчипеле çӳретĕн.
Çӳлтен çӳле пынă чух
Ахăр эсĕ курнă пуль
Тăван-пĕтен аттене?
Çавна пире кала-ха.
Итлĕр, сире калам-и?
Сирĕн аçăра курнăччĕ –
Хаяр тăшман çĕрĕнче,
Тимĕр карта варринче".

Çук, тем тесен те пĕртте ахальтен мар çыраннă вăл – Куçма Турханăн "Сĕве Атăла юхса кĕрет" романĕн иккĕмĕш кĕнекин пĕрремĕш пайĕнчи "Поэтпа хан" сыпăк!.. Кам-кам та, Куçма Турхан Поэзин чăн пĕлтерĕшне, Поэзин асамлă хăватне питĕ лайăх ăнланнă. Мĕншĕн тесен вăл хăй те чăн-чăн Поэт пулнă.

Куçма Турхан пире хăйĕн вилĕмсĕр "Сĕве Атăла юхса кĕрет" романĕпе "Хусанпала Мускав хушшинче" пурăннă мăн асаттемĕрсен савăнăçĕпе терчĕ, кĕре-

шĕвĕпе паттăрлăхĕ, инкекĕпе хавхаланăвĕ, ыратăвĕпе вилĕмсĕр шанчăкĕ çинчен каласа кăтартать. Çын тахçан пулнине тепĕр хут чĕртсе тăратма пултарать пулсан, мĕншĕн ăна аслă Юрăçă, аслă Калавçă теес мар?..

***

Куçма Турхан талантлă художник, чăн-чăн поэт пулнине, ман шутпа, "Сĕве Атăла юхса кĕрет" романăн сыпăкĕсене авторĕ еплерех ятсем хуни те çирĕплетет. Аса илер-ха, апла пулсан, вĕсенчен хăшне-пĕрне: "Çунакан ухă йĕппи", "Хусан мĕлки", "Читлĕхри кăсăя", "Купăс ăсти Ятламас", "Кĕске пушă хытă çапать", "Алран вĕçерĕннĕ çăрттан", "Ĕмĕтри кăнтăр çилĕ", "Çуната вĕçме сараççĕ", "Ярахвийĕн ят тухнă", "Хусан хапхи умĕнче", "Икĕ хурчка", "Çул хĕрринчи йывăç", "Ылтăн çăмарта тăвакан чăх", "Тыткăна лекнĕ уйăх", "Ылтăн пичетлĕ хут", "Çӳллĕ иккен Хусан хӳмисем", "Чулсем макăраççĕ", "Пурнăç пăрăнăçĕ", "Шухăшăм, ман шухăшăм", "Çармăс çинче çар вылять" тата ытти те, тата ытти те.

... Çук, ахальтен мар, ахальтен мар хăшĕсем "Сĕве Атăла юхса кĕрет" романа "ку вăл роман кăна мар, ку вăл – чăн-чăн поэма" тесе хаклаççĕ.

**КУ РОМАНĂН ТĔП СĂНАРĔ – ХАЛĂХ. ХАЛĂХ УЙРĂМ ÇЫНСЕНЧЕН ТĂРАТЬ**

**е Кăлăхах ӳпкелешетĕн эсĕ, критик**

"Первая книга романа К.Турхана "Свияга впадает в Волгу" (1960 г.) ценна смелой попыткой осветить далекую эпоху... Тема эта одна из интересных и нужных интересных тем... Читатель находит здесь для себя много познавательного материала. Однако художественный уровень романа (типизация героев, разработка сюжета, языковое мастерство) оставляет желать много лучшего. Образы недостаточно рельефны и типичны, герои плохо запоминаются... Поэтому "Свияга впадает а Волгу" отнюдь еще не стал подлинным историческим романом, каковым поспешили его назвать некоторые рецензенты" (Геннадий ХЛЕБНИКОВ "Чувашский роман". Шупашкар, 1966 ç.).

... Эп ăнланатăп: критик текенскерĕн критиклемелле. Ку – унăн "çăкăрĕ". Анчах темшĕн хăш-пĕр критиксем вăл е ку хайлава тишкерсе хак парас, çитменлĕхсене тупса палăртас вырăнне... çын ĕçне аркатма тăрăшаççĕ. Ара, ытла та татса калать-çке-ха Г.Хлебников тĕпчевçĕ: "образы недостаточно типичны, герои плохо запоминаются"...

Хветĕр Уяр вара, хăй генииллĕ "Таната" роман çырнăскер, ĕçтешĕн хайлавне пачах урăхла хаклать ав: "Куçма Турханăн романне вуласа тухрăм та эпĕ савăнсах кĕнеке çӳлĕкĕ çине вырнаçтарса лартрăм. Кăмăл тулчĕ...

Асра юлмалли сăнарсем нумай кĕнекере. Ахтупайпа Эрнепи, Тукайпа Урасмет, Нухратпа Чураппа, Гирей ханпа Булат Ширин... Çавăн чул çынна чĕртсе тăратма художник çеç пултарнă...

Романăн чĕлхи çăмăл, илемлĕ, халĕ манăçа тухнă сăмахсем чылай. Вĕсем кĕнекене тивĕçлĕ тĕс пăраççĕ.

... Уҫă сывлăша тухнă чухнехи пек ун кĕнекине вуланăҫемĕн вулас килет" (Хветĕр УЯР "Сĕве Атăла юхса кĕрет" статья! "Виҫĕ кун та, виҫĕ каҫ" кĕнекере. Шупашкар, 1965 ç.).

... Ку таранччен К.Турханăн "Сĕве Атăла юхса кĕрет" романне тишкернисем ҫак романри сăнарсен шутне тупса палăртма хăтланнă-и, ҫук-и – татса калаймастăп. Эп шутласа пăхнă тăрăх, "Сĕве Атăла юхса кĕрет" романра 232 СĂНАР пурăнать. Сăмах кунта уйрăм ҫынсем пирки пырать.

232 сăнар...

Чăваш прозинче, ман шутпа, ҫакăн чухлĕ сăнартан тăракан урăх хайлав ҫук. Пĕтĕм Раççей литературинче те, тем тесен те, хайлавра тӳрех 232 сăнара чĕртсе тăратса пурнăҫ пама пултарнă ҫыравҫă нумай мар.

Тата... Кăлăхах ӳпкелешет Геннадий Хлебников критик: "Турхан сăнарĕсем сăнсăр, асра юлмаҫҫĕ", – тесе. Сăнĕ-сăпачĕ те пур Куҫма Турханăн генийĕ чĕртсе тăратнă сăнарсен, вулаканăн асĕнче те юлаҫҫĕ вĕсем.

"Сĕве Атăла юхса кĕрет" романа тишкерсе хак панисенчен чылайăшĕ ҫак шухăша ҫирĕплетет: ку роман-эпопейăри тĕп сăнар – Халăх. Кузьма Сергеевич Турхан хăй те ку шухăшпа килĕшнĕ.

Ҫăмăл-и Халăха романăн тĕп сăнарĕ туса кăтартма? Ман шутпа, пĕртте ҫăмăл мар. Мĕншĕн тесен, халăх тени вăл уйрăм ҫынран ҫĕр хут, пин хут кăткăсрах, анлăрах, тарăнрах...

Турханăн тепĕр сăнарĕ вăл – Ту енĕ. Хусана та, Мускава та илĕртсе, астарса таракан Ту енĕ.

Мускав хулипе шĕкĕр Хусана та эпĕ "Сĕве Атăла юхса кĕрет" романри уйрăм сăнарсен вырăнне хурса хакланă пулăттăм. Мускавăн – хăйĕн сăнĕ-сăпачĕ, Хусанăн – хăйĕн. Мускавăн – хăйĕн шăпи, инкекĕ, савăнăҫĕ, тĕллевĕ. Хусанăн – хăйĕн.

Тата тепĕр чаплăран та чаплă, хăватлăран та хăватлă Сăнар пур романра. Ҫав Сăнар вăл – Вăхăт. Вăхăт ҫĕр ҫинчи чи вăйлă патшаран та вăйлă, чи хăватлă ҫартан та хăватлă. Вăл, Вăхăт, ҫĕр ҫинчисене пăхăнмасть. Ăна пăхăнаҫҫĕ ҫĕр ҫинчисем. Вăхăт – ҫуратать, Вăхăт – ура ҫине тăратать, Вăхăт – аркатать, Вăхăт – тĕрĕслет, Вăхăт – пулăшать, Вăхăт – сиплет, Вăхăт – Пуласлăх парнелет...

Вăхăта хаклакан Пурнăҫа хаклать. Куҫма Турханăн "Сĕве Атăла юхса кĕрет" романне вуланăҫемĕн эп ҫак чăнлăха тепĕр хут ăнлантăм.

***

..."Сĕве Атăла юхса кĕрет" роман – калама ҫук пысăк хайлав. Шанатăп: ку романа ҫине тăрса тĕпчесси малта-ха. Манăн вара, сăмахăма пĕтĕмлетсе, хисеплĕ вулаканăм, сана тепĕр хут Куҫма Турханăн "Сĕве Атăла юхса кĕрет" романне вулама сĕнессĕм килет.

Ку кĕнеке – ĕмĕр тăршшĕпе вуламалли кĕнеке.

**1999, ҫурла – 2000, кăрлач.**